чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

128 /26534/ № Кĕçнерни кун, 2014, утă (июль), 3 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 96-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин «Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командисене спорт енĕпе хатĕрлекен А.Игнатьев ячĕллĕ центр» бюджет учрежденийĕн йывăр атлетика енĕпе ĕçлекен тренерне **Геннадий Геннадьевич ИВАНОВА,** Шупашкар хула администрацийĕн финанс управленийĕн пуçлăхне **Натэлла Ромиловна ЧИЖАНОВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

педагогика тата воспитани парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкарти муниципалитетăн ачасене хушма пĕлӳ паракан «Ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантаракан «Хунав» центр» бюджет вĕренӳ учрежденийĕн директорне **Елена Анатольевна ГЕРАСИМОВĂНА,** Чăваш Республикин тĕп хулин – Шупашкар хулин муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан «5-мĕш гимнази» автономи учрежденийĕн директорне **Инна Владиславовна ИСАЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят;

Шупашкар районĕнчи муниципалитетăн «Тренккассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» бюджет учрежденийĕн вĕрентекенне **Ираида Аркадьевна ФОМИНАНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят;

саккунлăха çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Аслă сучĕн судйине **Юрий Николаевич ЩИПЦОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЮРИСЧĔ»** хисеплĕ ят панă.

## Майданçăсене явап тыттарасшăн

**Хăй тĕллĕн йĕркеленнĕ Луганск халăх республикин пуçлăхĕ Валерий Болотов пресс-конференцире трибунала памалли çынсен списокне пĕлтернĕ.**

**Унта – Украина президенчĕ Петр Порошенко, Арсений Яценюк премьер, Рада спикерĕ Александр Турчинов, ШĔМ тата оборона министрĕсем Арсен Аваковпа Михаил Коваль, Виталий Ярема генпрокурор тата ыттисем. Игорь Коломойские, Дмитрий Яроша, Олег Ляшкона, Юлия Тимошенкăна, Олег Тягнибока, Андрей Дещицăна, Виталий Кличкона та манса хăварман.**

**Рамблер.**

# Цехра – кĕр-кĕр! Тухать тавар...



cap.ru сайтăн сăн ÿкерчĕкĕ

***Ĕнер республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти автокомпонентсен заводĕнче пулчĕ. Вун-вун çул унта çăмăл автомашинăсене, çул-йĕр техникине юсанă. Шупашкарсем çеç мар, çывăхри районсенче пурăнакансем те ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра 127-ĕн вăй хураççĕ. 1990 çулсенчипе танлаштарсан предприяти тĕллевĕ нумай улшăннă. Малтан кунта автомашинăсем пухнă. Юлашки çулсенче ГАЗ автомобиль кабинине, капотне, алăкне, панельне, ытти пайне хатĕрлеççĕ. Чул хулари автомашина туса кăларакан завода ăсатаççĕ. Кăçалтан унта ГАЗ-3307 валли те саппас пайсем леçеççĕ.***

Эльшад Гасанов директор Чăваш Ен Пуçлăхне предприяти ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕ, производствăн кашни цехне çитсе вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрălса тăни, коллектив еплерех ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ. Республика Пуçлăхĕ цехра вăй хуракансемпе тĕл пулчĕ. Завод малаллах талпăннине палăртрĕ. Ун умĕнчи йывăрлăхсене те пытармарĕ. Предприятире ĕçлекенсен ыйтăвĕсене хуравларĕ. «Йĕпе-сапара завод территорийĕнче çумăр шывĕ капланса тăрать. Предприяти вырнаçнă урамра та çавнашкалах. Çĕр айне пăрăх хурса ăна юхтарса тăрас тĕллев çук-и?» – терĕ çамрăк хĕрарăм. «Хальлĕхе Шупашкар территорийĕн 30 процентне çеç çумăр шывне çĕр айне юхтарса пухмалли пăрăхсем хывнă. Ку ĕçе пурнăçлама укçа питĕ нумай кирлĕ. Кăçал ăна И.Яковлев проспектĕнче, пĕлтĕр База тăкăрлăкĕнче турăмăр», – хуравларĕ хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов.

Ача амăшĕ Шупашкарти Çурçĕр-хĕвел анăç районĕнче тепĕр шкул уçас ыйтăва çĕклерĕ. Вăл Университет урамĕнчи 2-мĕш çуртра пурăнать. «Унти микрорайонта пин ача вĕренмелĕх шкул тума палăртнă, – хурав пачĕ Л.Черкесов. – Тен, строительствăна 2017 çулта пуçлăпăр».

Хĕрарăмсен ушкăнне пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулсенче пĕлӳ илекенсене музыкăна е ӳнер ăсталăхне вĕрентмелли йĕрке кăсăклантарчĕ. «Калăпăр, ашшĕ-амăшĕн шкул хыççăн ачана юрлама е ӳкерме тӳлевсĕр вĕрентмешкĕн право пур», – ăнлантарчĕ М.Игнатьев. Кăçалхи авăн уйăхĕнчен шкулсенче вĕренекенсем ГТО нормативне пурнăçлама пуçлассине пĕлтерчĕ.

Вăл «Минерал» обществăна та çитрĕ. Алексей Васильев директор ăна предприятин кăçалхи ĕç кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ. Кунта 133-ĕн вăй хураççĕ. Мраморпа гранитран тĕрлĕ продукци касса кăлараççĕ. Общество республикăри çурт-йĕре илемлетме мрамор плитасемпе тивĕçтерет. М.Игнатьев унăн ĕçĕпе кăмăллă.

«Гидрант» общество коллективĕпе те тĕл пулма вăхăт тупрĕ. Вăл 94 çынна пĕрлештерет. Ытларахăшĕ – çĕвĕçсем. Пушар хуралĕн службин ĕçченĕсем валли вут-çулăмпа кĕрешмелли ятарлă тумтир, атă-пушмак, алсиш, пиçиххи, 800-1000 градус вĕрие чăтакан çи-пуç çĕлеççĕ, ытти продукци туса кăлараççĕ. Ăна республикăри пушар сӳнтерекен службăсене кăна мар, «Роснефть», «Транснефть» обществăсене ăсатаççĕ. М.Игнатьев çĕвĕçсемпе куçа-куçăн калаçрĕ. Социаллă ыйтусемпе вĕсем мĕн шухăшланине ыйтса пĕлчĕ. Сăмахран, предприяти вырнаçнă Машина тăвакансен урамĕнчен хĕлле Çĕнĕ Шупашкара автотранспортпа çӳреме çăмăл мар иккен. Михаил Васильевич хула пуçлăхĕнчен ку ыйтăва татса пама ыйтрĕ. Коллективра ытларахăшĕ чăвашсем пулни палăрчĕ. Вĕсемпе тăван чĕлхепе калаçрĕ. «Ачăрсене чăвашла калаçма вĕрентетĕр-и?» – ыйтрĕ вăл. «Вĕренесшĕн мар», – хурав пачĕ çамрăк хĕрарăм. «Тăван чĕлхене вĕрентме тăрăшăр», – терĕ республика Пуçлăхĕ. Тĕрлĕ ыйтăва хуравларĕ.

Çак предприятисен производство калăпăшĕ темиçе çул каялла пысăк пулман. Юлашки вăхăтра вăл ӳссех пынă. Мĕнех, вĕсем – ӳсĕм çулĕ çинче.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

# Вунă çул Андриянсăр...

***Ун çинчен иртнĕ вăхăтпа çырма пĕртте çăмăл мар. Шелсĕр вилĕм ăна шăпах çавăн чухлĕ çул каялла тăван халăхăмăртан уйăрса кайрĕ. Хăй çуралнă, ялан асра тытнă тăван кĕтесĕнче канăç тупрĕ, чунĕ çăлтăрсем патне ăсанчĕ. Ячĕ чăваш тĕнчи хăйĕн мухтавлă ывăлĕ вырăнне йышăннă пин-пин çын чĕринче-асĕнче упранать. Çак юрату-хисеп туйăмĕ нихăçан та сĕвĕрĕлмĕ-иксĕлмĕ, вун-вун ăру сумлă Андриянăмăра асра тытса, сума суса пурăнĕ.***



Пирĕншĕн, чăвашсемшĕн, Совет Союзĕн виççĕмĕш, планетăмăрти пиллĕкмĕш космонавт летчик, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев генерал-майор – чăннипех çутă çăлтăр. Вăл тĕнче уçлăхне икĕ хут кайса килнĕрен çеç мар, урăх сăлтавпа та çак ята тивĕç: пĕтĕм тĕнчипех чăваш çине урăхла пăхтарма пуçлаттарнă А.Николаев вĕçевĕсем. Чăвашлăхшăн тунă ырă, пуçаруллă ĕçсен, халăхсен хушшинчи ăш пиллĕ çыхăну-хутшăнусен элчи пулнă-çке вăл.

Çĕр туртăмне парăнтарса йывăрăшсăр, сывлăшсăр, тĕпсĕр уçлăха çĕкленнĕ малтанхи космонавтсем темиçе ăрушăн юмахри Улăпсем пек туйăннă. Чылай космонавтăн алă ăшшине туйса тăнăран асăмран нихăçан тухман пĕр самант çинчен çырса кăтартмасăр чăтăм çитмест. Хăй вăхăтĕнче, Байконур космодромра салтак хĕсмечĕ пуçланнă тапхăрта, Андриян Григорьевич пирĕнпе, уйăх каялла çар тумне тăхăннă чăваш ачисемпе, ăш пиллĕ калаçу пуçарнă самантра, Георгий Тимофеевич Береговой сумлă ентешĕмĕре тăван халăхăмăр пирки нумай ырă сăмах калани паян та хăлхара янăрать. «Андриян, енчен те сана ĕçчен те чăтăмлă чăваш халăхĕ çуратса тĕнче уçлăхне çĕклерĕ пулсан, вĕсем те, пирĕн çине кăмăллăн пăхса, маттур салтаксем пуласса нимĕн чухлĕ те иккĕленместĕп», – терĕ пире кашнине алă тытса. Ун хыççăн та чăваш кăйкăрĕпе тăтăш тĕл пулма тивнĕрен хама телейлĕ çынсен шутне кĕртетĕп. Вăл хăйне нихăçан та çăлтăр-çын пек тытман. Яланах – уçă кăмăллă, хавас, тараватт, пулăшма хатĕр...

2004 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕ пирĕн республикăмăрăн историйĕнче хура тĕспе çырăнчĕ – Андриян Григорьевичăн чĕри тапма чарăнчĕ. Унпа сыв пуллашма, юлашки çула ăсатма чăваш тĕнчипе пĕрлех ытти халăх ывăлĕ-хĕрĕ, ют çĕр-шывран килнĕ хăнасем, ĕçтешĕсем йышлăн хутшăнчĕç. Тупăка антарнă чухне лăпкă çумăр çуса иртрĕ. Этемлĕх кăна мар, çут çанталăк та пирĕнпе пĕрле хурланчĕ тейĕн.

Çирĕплетсех калама пултаратăп: Шуршăлти Космонавтика музейĕн ĕçченĕсем унăн ячĕ нихăçан та ан манăçтăр, вăл çутнă Çăлтăр нихăçан та ан сӳнтĕр тесе хăйсенчен мĕн килнине пурне те тăваççĕ. 47 çул каялла уçăлнă музейре – Андриянăмăр тĕнчи. Музейĕн хаклă хăнисен кĕнекинче космонавтсен йышлă делегацийĕ ячĕпе Павел Попович, Андриянăмăрăн тĕнче уçлăхĕнче пĕрле вĕçнĕ «шăллĕ», çырса хăварнă «Шуршăлти Космонавтика музейĕ тĕнчене пĕлес-тĕпчес туртăма татах та ӳстерĕ, çакăн пĕлтерĕшне малашне те анлăлатса пырĕ, пин-пин çыннăн техника шухăшлавĕн Çитĕнĕвĕпе Паттăрлăхăн сăнĕ пулса тăрĕ. Паянхи оборудованипе тивĕçтернĕ планетари-астрономи класĕнчи занятисем ачасене астрономипе географие тĕплĕнрех пĕлме кăна мар, хăйсен ĕмĕчĕсене пурнăçлама та пулăшĕç» сăмахсем – коллектившăн тĕп тĕллев вырăннех. Мемориал комплексĕн пĕчĕк йышĕ ăна пысăк яваплăхпа пурнăçлать.

Андриянăмăр пирĕнтен уйрălса кайнă кун ăна сума суса пуç таймa республикăри хуласемпе районсенчен, Чăваш Ен тулашĕнчен тĕрлĕ ăру çыннисем йышлăн килĕç, асăну митингне хутшăнĕç, часавайри вил тăпри çине чĕрĕ чечексем хурĕç, Андриян Николаевăн ачалăхĕ иртнĕ çурта кĕрсе курĕç, «А.Г.Николаев космонавт çулĕпе» велочупура чун çирĕплĕхĕпе чăтăмлăха тĕрĕслĕç...

– Юрий Алексеевич Гагаринăн тĕнчене тĕлĕнтернĕ вĕçевĕ хыççăн çулталăк иртсен космос анлăхне Чăваш Енĕн мухтавлă ывăлĕ Андриян Николаев парăнтарнă, – терĕ кăçалхи Космонавтика кунне Шуршăлти музейре палăртнă уявра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. – Космос тĕпчевĕн аталанăвĕн тата уçлăха парăнтарас ĕçĕн историйĕ, тӳпе романтики хĕрӳ чĕреллĕ çамрăксене халĕ те илĕртет. Пирĕн республикăри çамрăк космонавтсен юхăмĕ икĕ пин ытла арçын ачапа хĕр ачана пĕрлештерет. Вĕсене Андриян Григорьевичăн ырă тĕслĕхĕ хавхалантарать, малалла ăнтăлма чĕнет...

Чăваш Ен çĕрĕ тĕнче уçлăхне парăнтарнă икĕ Улăп-паттăра – Андриян Григорьевич Николаевпа Николай Михайлович Бударина, чăвашпа вырăса, çуратса ӳстернĕ, виççĕмĕшне – Муса Хираманович Манарова, Дагестанри лак халăхĕн ывăлне – космоса çĕкленме хăват панă. Вĕсен ретне тăракан татах пулĕ. Шанăç пысăк.

Вунă çул Андриянсăр... Паян, вăл пирĕнтен уйăрălса кайнă кун, эпир ăна ырă, ăшă туйăмпа аса илĕпĕр, пуç тайăпăр. Паян кăна мар. Малашне те...

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

## Чăвашпотребсоюз – чи лайăххисен шутĕнче

***Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ умĕн Раççей Федерацийĕн Центросоюзĕн Канашĕн Президиумĕ Пĕтĕм тĕнчери регионсен потребительсен обществисен хушшинчи ăмăртăвăн 2014 çулхи пĕрремĕш квартал кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ.***

Чăвашпотребсоюза пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле аталантарнăшăн – иккĕмĕш, общество апатланăвне аталантарнăшăн – пĕрремĕш, хатĕрлев ĕç-хĕлне аталантарнăшăн – пĕрремĕш, вак суту-илĕве аталантарнăшăн виççĕмĕш вырăнсене панă.

**С.ВАСИЛЬЕВ.**

## Пленэр умĕн

***Патăрьел районĕнчи Турхан ялне В.И.Сурков ячĕллĕ Мускав патшалăх ӳнер институчĕн Хусанти филиалĕн студенчĕсем килсе çитнĕ.***

Сăрă ăстисене вăтам шкул директорĕ Владимир Иванов, педагогика ĕçĕн ветеранĕ Валентин Сергеев тата ачасем ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çывăх кунсенче паллă художникăн Алексей Кокелĕн тăван ялĕнче Пĕтĕм тĕнчери пленэр ĕçлеме пуçлĕ. Пĕлтерĕшлĕ те пысăк мероприяти умĕн живописпе графика факультечĕн аслă преподавателĕ Сергей Царев ертсе пыракан ушкăн Патăрьелсене хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарĕ. Картинăсенче вĕсем Чăваш Енĕн куçа тыткăнлакан илемлĕ тавралăхне, Патăрьел тăрăхĕн паллă вырăнĕсемпе çыннисене сăнлĕç. Палăртмалла: çамрăк ӳнерçĕсенчен чылайăшĕ Раççей тава тивĕçлĕ художникăн, Тутар Республикин тава тивĕçлĕ деятелĕн, Турханти пленэра темиçе хут хутшăннă Зуфар Гимаевăн вĕренекенĕсем. Вĕсен ĕçĕсемпе утă уйăхĕн 5-мĕшĕччен паллашма пулать.

**О.МАСЛОВ.**

## Çамрăк спортсменка – тĕнче кубокĕн призерĕ

***Чăваш Ен спортсменĕсем пысăк ăмăртусенчен медальсемпе таврăнни çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Акă нумаях пулмасть тепĕр ырă хыпар çитрĕ.***

Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студентки Зинаида Антонова Италири Арко хулинче çамрăк спортсменсен хушшинче сăртлă вырăнта чупас енĕпе иртнĕ тĕнче кубокĕнче бронза медаль çĕнсе илнĕ. Олимп резервĕсен ятарлă 1-мĕш спорт шкулĕнче Галина Архиповăпа Николай Захаров тренерсем патĕнче ăсталăха туптаканскер командăсен тупăшăвĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Уйрăм ăмăртура вара Елчĕк пикине финиша маларах çитмешкĕн пĕр çеккунт кăна çитмен, çавăнпа вăл пьедестал çине хăпарайман. Телее, çамрăк спортсменкăн кăçалхи пĕрремĕш çитĕнĕвĕ мар. Тĕнче кубокне хутшăниччен пирĕн ентеш çĕр-шыв кубокĕнче иккĕмĕш кăтартупа палăрнă. Çавăн пекех вăл кросс енĕпе иртнĕ Раççей кубокĕнче «кĕмĕле» тивĕçнĕ, пĕлтĕр 3000 метрлă дистанцие виççĕмĕш вĕçленĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Çемье – шухăшпа ĕç-хĕл пĕрлĕхĕ

***Куславккари тĕп вулавăшра «Пархатарлă мăшăрлану» мероприяти иртнĕ. Ăна Пĕтĕм Раççейри Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне халалланă. Пухăннисене вулавăш ĕçченĕсем асăннă уяв историне каласа панă. Сăмах май, ăна 2008 çултанпа паллă тăватпăр.***

Мероприятире туй сăн ӳкерчĕкĕсен йăли-йĕрки пирки те, йыхрав хучĕсен хăйне евĕрлĕхĕ çинчен те сăмах пуçарнă. Венчет çĕрри тăхăнма хатĕрленекен хĕрсемпе каччăсен паянхи хутшăнăвĕсене те тишкернĕ. Çемье пирки калакан ваттисен сăмахĕсен викторини пурне те кăмăла килнĕ. Анатолий Уткин поэт хăйĕн «На том спасибо, что живу...» çĕнĕ кĕнекипе паллаштарнă, мăшăрне халалланă сăвăсене вуласа панă. Унтан вулавăш хăнисем «Çемье – шухăшсемпе ĕçсен пĕрлĕхĕ» кĕнеке куравне пахаланă. Выставкăна çемьери килĕшӳпе çураçу вăрттăнлăхĕсене уçса паракан литературăна тăратнă.

**А.РОЗОВА.**

## Паллашăр: çĕнĕ курав

***Элĕкри литературăпа тавра пĕлӳ музейĕнче «Пирĕн паллă ăславçăсемпе рационализаторсем» курав йĕркеленĕ. Ăна аваллăх управçин ĕçченĕсем Ăславçăпа рационализатор кунне халалланă.***

Пĕрремĕш стенд Шĕнтреш ялĕнче çуралса ӳснĕ, ЧР тава тивĕçлĕ изобретателĕн Гурий Степановăн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе туллин паллаштарать. Тĕрлĕ çĕрте вăй хунă вăл: «Химпромра», «Чăвашгражданпроектра», «Элетропроектра», «Промтракторта»... Гурий Николаевич СССР Академийĕн экологи проблемисен ăслăлăхпа производство центрĕ çумĕнче Чăваш уйрăмне йĕркеленĕ. Унта директорта ĕçленĕ. Выставкăра Пĕтĕм тĕнчери куравсенче илнĕ дипломсемпе те паллашма пулать. Иккĕмĕш стенда вара Тавăт ялĕнче çуралса ӳснĕ, ЧР тава тивĕçлĕ рационализаторне Евгений Соломкина халалланă. Виççĕмĕш стендра йăлтах – Синер ялĕнче çут тĕнчене килнĕ Иван Васильев рационализатор çинчен.

**А.ГРОМОВА.**

## Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 15 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 60 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 30 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 14 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 43 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 28 минут.**

*Çыхăну*

# Экопуласлăх та шухăшлаттарать

***ЧР Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствинче «Экоçамрăксем: пуласлăха куçăм ÿкет» «çавра сĕтел» хушшинчи калаçу иртрĕ.***

Унта Тутарстан, Мари Эл, Киров облаçĕн, Чăваш Ен делегацийĕсем хутшăнчĕç. Ăна йĕркелекенсем – Евгений Юшин министр çумĕ, ЧР çут çанталăкпа усă курассине тĕпчекен экологи институчĕн директорĕ Владимир Барсуков, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕ Игорь Кожанов.

Пĕр тĕллевпе пуçтарăннисене Иван Исаев министр саламларĕ. «Обществăра экологи культурине вăйлатасси Раççейри кирек хăш регионта та, вăл шутра Чăваш Енре те, пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ. – Тăван тавралăха хÿтĕлекен общество организацийĕсен элчисем промышленноç-техника аталанăвĕ çут çанталăка сиен сахалрах кÿрекен çулйĕре сÿтсе яврĕç. Хальлĕхе çынсем тавралăха пысăк витĕм кÿреççĕ. Ăна варалама чарăнмалла. Экологи культурине ÿстермелле, çемьере, садикре, шкулта чун-чĕрене хывмалла. Унта кĕрсе вырнаçсан çеç этем тăван тавралăха упрассишĕн тăрăшĕ».

Экологи пĕлĕвĕ парассипе министр çумĕ Е.Юшин паллаштарчĕ. Çĕмĕрле хулинчи 3-мĕш шкул директорĕн çумĕ тата «Шухăшна «ешĕллентер» проект авторĕ Елена Голованова пĕчĕк хулари ачасене çут çанталăк пуянлăхне хÿтĕлеме вĕрентесси çинчен каларĕ. Экологин «ЭКА» общество организацийĕн ертÿçи Ольга Шаклеина хăйĕн сăмахне экологи юхăмне анлăрах сарассипе, тавралăха хÿтĕлеме тĕллев лартнă общество организацийĕсене аталанма май туса парассипе çыхăнтарчĕ. Раççей Социаллă пурнăçпа экологи пĕрлĕхĕн Хусанти уйрăмĕн ертÿçи Сергей Мухачев тутарсен экологи пĕрлешĕвĕсемпе паллаштарчĕ. ЧР Суту-илÿпе промышленноç палатин тавралăх комитечĕн председателĕ Андрей Карсаков çитĕнекен ăрăва эколог профессине вĕрентес енĕпе хăш органсен ĕçлемеллине ăнлантарчĕ.

«Симĕс хула» организаци ертÿçи Марина Федорова обществăра экологи культури вăй илтĕр тесен мĕн-мĕн тумаллине каларĕ. «Хусан кремлĕ» заповедник сотрудникĕ, РФ «Симĕс планета» организацийĕн Тутарстанри уйрăмĕн председателĕ Наталья Валеева эковолонтерсен ĕç опытне тишкерчĕ.

Калаçăва хутшăннисен усăллă сĕнĕвĕсене тĕпе хурса резолюци хатĕрлерĕç. Кăçал Атăлçи регионĕсен хушшинче экологи форумĕ, шкул вăрманлăхĕсен слечĕ, экологи пĕрлĕхĕсен фестивалĕ иртterме йышăнчĕç.

■ **Анна ЕВГРАФОВА**

*Сыхлав*

# Асăрханăр: çул çинче – туссем!

***Автоçул çÿрев йĕркипе килĕшÿллĕн вăрман, уй-хир чĕр чунĕ çул урлă пĕрмай каçса çÿрекен тĕле виç кĕтеслĕ, пăши мăйракиллĕ е урăх чĕрлĕх сăнĕллĕ паллă лартаççĕ.***



Унăн çывăхĕнче транспорта вăйлă хăваламалла мар, енлĕк каçма пултарнине асра тытмалла.

Чĕр чун çав паллă мĕне пĕлтернине тĕшмĕртмест. Пурнăçĕшĕн хăш çул шанчăкларах туйăнать – çавăнта пырать. Пăши мăйракиллĕ паллă вырнаçтарман тĕлтен те енлĕк чупса каçма пултарассине водительсен манмалла мар. Чылайăшĕ çакна пуçра тытман пирки инкеке лекет.

Шăрăхра вăрăм туна, ÿпрешăна пĕлĕт пек явăнса пăшие, хир сысние, ытти чĕрлĕхе тапăнать. Вĕсенчен тарса пытанас тесе вăрмантан усă çĕре тухаççĕ, пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçаççĕ. Пĕлтĕр автоçул урлă чупса каçнă чух транспорт 3 пăшипе пĕр хир сыснине тăрăнтарнă. Кăçал 4 пăшипе 2 хир сыснине пырса çапнă, пурте вилнĕ.

Çĕртме уйăхĕн пĕрремĕш эрнинче – умлă-хыçлă виçĕ инкек. Шупашкар çумĕнче – хир сысни, Улатăр тăрăхĕнче – пĕр, Муркаш районĕнче икĕ пăши шар курнă. Водительпе пассажирсем суранланман.

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби руль умĕнче ларса пыракансенчен çĕрле е тавралăха тĕтре хупăрласан тимлĕ пулма, автоçул урлă кирек ăçтан тата талăкăн вăл е ку сехетĕнче чĕр чун каçассине яланах асра тытма ыйтать.

■ **Владимир КУЗЮКОВ,**
**ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин ертÿçи**

# Çĕнĕ кĕнеке



*● Л.Егоров кĕнекепе паллаштарать.*

Федерацин «Сăрçи» заповедникĕн ăслăлăх сотрудникĕ, биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Леонид Егоров Наци библиотекинче пухăннисене «Методы экологических исследований» вĕренÿ пуххипе паллаштарнă. «Ăна хатĕрлеме Чăваш Ен, Тутарстан, Мордва, Самар облаçĕн тĕпчевçисем хутшăнчĕç, – терĕ телефонпа кĕнеке авторĕсенчен пĕри, унăн редакторĕ Л.Егоров. – Унта «Сăрçи» заповедникăн ăслăлăх сотрудникĕ, биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Валентина Подшивалинăн статйисем те кĕчĕç».

Кĕнекере тăван тавралăхра çÿресе çут çанталăк тата этем, çын тата чĕр чун, çут çанталăк тата чĕрлĕх хутшăнăвĕсене, биологие, географие тĕпчемелли ĕç меслечĕсене çутатнă. Вăл биологи, экологи, географи специальноçĕсене вĕренекен студентсем валли.

■ **С.СЕРЕГИН**

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен» 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88–91 №-сем; 2012, 92 /I том/, 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; «Республика» хаçат, 2014, ака уйăхĕн 2-мĕшĕ/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ II сыпăка çакăн пек çырса $6^2$ статья хушса хурас:

**«$6^2$ статья. Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн, Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйăн саккунлă ĕç-хĕлне чăрмантарни**

1. Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй, Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй ĕç-хĕлне вĕсем тăвакан йышăнусем çине витĕм кÿрес тĕллевпе хутшăннăшăн –

пĕр пин тенкĕрен пуçласа икĕ пин тенкĕ таран административлă штраф тÿлеттереççĕ.

2. Должноçри çынсем Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн, Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйăн саккунлă требованийĕсене пурнăçламаншăн –

икĕ пин тенкĕрен пуçласа виçĕ пин тенкĕ таран административлă штраф тÿлеттереççĕ.

3. Должноçри çынсем Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăя, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăя, Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăя информаци /документсем, материалсем, ыйтусем çине хуравсем/ памалли палăртнă сроксене пăхăнманшăн –

пĕр пин тенкĕрен пуçласа икĕ пин тенкĕ таран административлă штраф тÿлеттереççĕ.»;

2/33 статьян 2-мĕш пайне çакăн пек çырса «л» пункт хушса хурас:

«л/ Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй, Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй – çак Саккунăн $6^2$ статйипе пăхса хăварнă административлă правăна пăснисем çинчен.»;

3/34 статьян 1-мĕш пайĕнче «$6^1$, 8» цифрăсене «$6^1$, $6^2$» цифрăсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çĕртме, 30, 39 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИНЕ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔСЕНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЫТТИ ПРАВО АКЧĔСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРМАЛЛИ ТАТА ВĂЯ КĔРТМЕЛЛИ ЙĔРКЕ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Çак Саккун Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕсене тата хушăвĕсене /малалла – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсем/, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕсене тата хушăвĕсене /малалла – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсем/, этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене тата тивĕçĕсене пырса тивекен, организацисен право статусне палăртакан е ведомствăсем хушшинчи пĕлтерĕшлĕ шутланакан, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕнче патшалăх регистрацийĕнче пулнă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсене /малалла – Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсем/ пичетлесе кăлармалли тата вĕсене вăя кĕртмелли йĕркене палăртать.

**2 статья**

1. Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла. Чăваш Республикин пичетлемен саккунĕсемпе усă курмаççĕ.

2. Чăваш Республикин этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене тата тивĕçĕсене пырса тивекен нормативлă право акчĕсемпе, енчен те вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларман пулсан, усă курма пултараймаççĕ.

**3 статья**

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ саккуна йышăннă куна Чăваш Республикин саккунне йышăннă кун тесе шутлаççĕ.

**4 статья**

1.Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ алă пуснă кун хыççăн çичĕ кун хушшинче официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла.

2.Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене, патшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан сведенисемлĕ е вăрттăнлăхра тытмалли сведенисемлĕ актсемсĕр е вĕсен уйрăм положенийĕсемсĕр пуçне, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ алă пуснă кун хыççăн çичĕ кун хушшинче официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла.

3.Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсене, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсене, патшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан сведенисемлĕ е вăрттăнлăхра тытмалли сведенисемлĕ актсемсĕр е вĕсен уйрăм положенийĕсемсĕр пуçне, алă пуснă кун хыççăн çичĕ кун хушшинче официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла.

4.Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсене, патшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан сведенисемлĕ е вăрттăнлăхра тытмалли сведенисемлĕ актсемсĕр е вĕсен уйрăм положенийĕсемсĕр пуçне, вĕсене патшалăх регистрацийĕ тунă кун хыççăн вунă кун хушшинче официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла.

5.Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсене, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсене «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă сроксенче официаллă йĕркепе пичетлесе кăлармалла.

**5 статья**

1. Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларма Чăваш Республикин Пуçлăхĕ ярса парать, вĕсене чăвашла тата вырăсла пичетлеççĕ.

Чăваш Республикин Конституцийĕн, Чăваш Республикин саккунĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ алă пуснă пĕр экземплярне Чăваш Республикин Патшалăх Канашне параççĕ.

2.Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларма Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ е унăн çумĕ ярса парать.

3.Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсене, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсене, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларма Чăваш Республикин Пуçлăхĕ палăртнă йĕркепе ярса параççĕ.

**6 статья**

1.Чăваш Республикин Конституцийĕн тата Чăваш Республикин саккунĕсен тулли тексчĕсене «Хыпар» тата «Республика» республика хаçачĕсенче тата «Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи» информаци бюллетенĕнче пĕрремĕш хут пичетленине е «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/, «Интернет» информаципе телекоммуникаци сечĕн Чăваш Республикин Власть органĕсен порталĕнче /www.cap.ru/ пĕрремĕш хут вырнаçтарнине /пичетленине/ вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларни тесе шутлаççĕ.

2.Чăваш Республикин Конституцийĕ тата Чăваш Республикин саккунĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă хыççăн вăя кĕреççĕ. Чăваш Республикин этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене хÿтĕлес ыйтусемпе йышăннă саккунĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртмесĕр вăя кĕмеççĕ.

3.Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсен тулли тексчĕсене «Республика» республика хаçатĕнче тата «Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи» информаци бюллетенĕнче пĕрремĕш хут пичетленине е «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/, «Интернет» информаципе телекоммуникаци сечĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн официаллă сайтĕнче /www.gs.cap.ru/ пĕрремĕш хут вырнаçтарнине /пичетленине/ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларни тесе шутлаççĕ.

4.Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн нормативлă пĕлтерĕшлĕ йышăнăвĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă хыççăн вăя кĕреççĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене хÿтĕлес ыйтусемпе çирĕплетнĕ нормативлă пĕлтерĕшлĕ йышăнăвĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртмесĕр вăя кĕмеççĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ытти йышăнăвĕсем, енчен те йышăнусемпе хăйсемпе вĕсем вăя кĕресси çинчен урăхла йĕрке палăртман пулсан, вĕсене çирĕплетнĕ кунран пуçласа вăя кĕреççĕ.

**7 статья**

1.Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсен, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсен тулли тексчĕсене «Вести Чувашии» республика хаçатĕнче, «Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи» информаци бюллетенĕнче пĕрремĕш хут пичетленине е «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/, «Интернет» информаципе телекоммуникаци сечĕн Чăваш Республикин Власть органĕсен порталĕнче /www.cap.ru/ пĕрремĕш хут вырнаçтарнине /пичетленине/ вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларни тесе шутлаççĕ.

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн нормативлă пĕлтерĕшлĕ акчĕсем, енчен те актсемпе хăйсемпе вĕсем вăя кĕресси çинчен урăхла йĕрке палăртман пулсан, вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн çичĕ кун иртсен вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен право статусне палăртакан, этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене хÿтĕлес ыйтусемпе йышăннă Чăваш Республикин Пуçлăхĕн, Чăваш Респубкин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртмесĕр вăя кĕмеççĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн ытти акчĕсем, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсем, çав шутра патшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан сведенисемлĕ е вăрттăнлăхра тытмалли сведенисемлĕ актсем, енчен те актсемпе хăйсемпе вĕсем вăя кĕресси çинчен урăхла йĕрке палăртман пулсан, алă пуснă кунран пуçласа вăя кĕреççĕ.

3. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсен тулли тексчĕсене «Вести Чувашии» республика хаçатĕнче пĕрремĕш хут пичетленине е «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/ пĕрремĕш хут вырнаçтарнине /пичетленине/ вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларни тесе шутлаççĕ.

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсем вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртмесĕр вăя кĕмеççĕ.

**8 статья**

1.Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн акчĕсене, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн акчĕсене тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен нормативлă право акчĕсене ытти массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлеме, çавăн пекех телевидени тата радио урлă пурне те пĕлтерме /халăх патне çитерме/, патшалăх органĕсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, должноçри çынсене, организацисене ярса пама, çыхăну каналĕсем тăрăх ăсатма, машинăпа вуламалли формăпа салатма пултараççĕ.

2.Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă актсене çавăн пекех уйрăм кăларăм е документсен пуххи евĕр пичетлесе кăларма пултараççĕ.

**9 статья**

Чăваш Республикин саккунне пичетлесе кăларнă чухне Чăваш Республикин саккунĕн ятне, ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ йышăннă куна, ăна алă пуснă должноçри çынна, ăна алă пуснин вырăнне тата кунне, регистраци номерне кăтартаççĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвне, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн актне, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн актне, Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн нормативлă право актне пичетлесе кăларнă чухне унăн ятне /пур пулсан/, ăна алă пуснă должноçри çынна, ăна алă пуснин вырăнне тата кунне, регистраци номерне кăтартаççĕ. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн нормативлă право актне пичетлесе кăларнă чухне çавăн пекех Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕнче патшалăх регистрацийĕ туни çинчен калакан сведенисене кăтартаççĕ.

**10 статья**

Хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас:

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин конституци саккунĕсене тата саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене пичетлесе кăлармалли тата вĕсене вăя кĕртмелли йĕрке çинчен» 1994 çулхи авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1994, 2 №/;

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин конституци саккунĕсене тата саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене пичетлесе кăлармалли тата вĕсене вăя кĕртмелли йĕрке çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» 1999 çулхи чÿк уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 32 №/;

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин конституци саккунĕсене тата саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене пичетлесе кăлармалли тата вĕсене вăя кĕртмелли йĕрке çинчен» саккунĕн 4 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» 2006 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 17 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 69 №/;

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Президенчĕн должноçĕн ятне улăштарнине пула Чăваш Республикин хăш-пĕр саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 2011 çулхи раштав уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 96 №-лĕ саккунĕн 1 статйи /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 92 № /I том/;

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин конституци саккунĕсене тата саккунĕсене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене пичетлесе кăлармалли тата вĕсене вăя кĕртмелли йĕрке çинчен» саккунĕн 1 тата 4 статйисене улшăнусем кĕртесси çинчен» 2012 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 97 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2013, 12 №/.

**11 статья**

Çак Саккун 2014 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çĕртме, 30, 40 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ТĂЛĂХ АЧАСЕНЕ ТАТА АШШĔ-АМĂШĔН АСĂРХАВĔСĔР ЮЛНĂ АЧАСЕНЕ ПАТРОНАТ ЙĔРКИПЕ ВЫРНАÇТАРАССИ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче тăлăх ачасене тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасене патронат йĕркипе вырнаçтарасси çинчен» 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 43 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 71 №; 2010, 85 №; 2012, 94 № /çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 1 статьяра:

иккĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«тăлăх ачасене тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасене патронат йĕркипе вырнаçтарни /малалла – патронат/ – опекăпа попечительство органĕ тата патронат воспитателĕ хушшинче патронатла çемье /патронат, патронат воспитанийĕ/ çинчен тунă договор тăрăх тăлăх ачасене тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасене /малалла çавăн пекех – ача /ачасем/ опекăна е попечительствăна парса вырнаçтарни;»;

тăваттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«патронат воспитателĕ – патронатла çемье /патронат, патронат воспитанийĕ/ çинчен калакан договорпа килĕшÿллĕн патроната панă ачана /ачасене/ воспитани паракан çын;»;

улттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасем – пĕртен-пĕр ашшĕ-амăшĕнчен е вĕсенчен иккĕшĕнне те ашшĕ-амăшĕн прависене туртса илнине, вĕсен ашшĕ-амăшĕн прависене чакарнине, ашшĕ-амăшĕ хыпарсăр çухалнă, хавшак ăс-хакăллă /хавшакланнă ăс-хакăллă/ тесе йышăннине, вĕсем вилнĕ тесе пĕлтернине, çав çын ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă факта судпа палăртнине, ашшĕ-амăшĕ ирĕк прависĕр юлнă май наказани панине тивĕçтерекен учрежденисенче пулнине, преступлени тума пултарнă тесе шутланакансене тата айăпланакансене хупса усракан вырăнсенче пулнине, ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене воспитани парассинчен е вĕсен прависемпе интересĕсене хÿтĕлессинчен пăрăннине, ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене вĕренÿ организацийĕсенчен, медицина организацийĕсенчен, социаллă пулăшу ĕçĕсем паракан организацисенчен илме килĕшменнине пула, çавăн пекех пĕртен-пĕр ашшĕ-амăшĕ е вĕсенчен иккĕшĕ те паллă мар, ача ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнине саккун палăртнă йĕркепе йышăннă ытти тĕслĕхсенче ашшĕ-амăшĕн е вĕсенчен иккĕшĕн асăрхавĕсĕр юлнă 18 çула çитмен çынсем.»;

2/ 5 статьяна çакăн пек çырса хурас:

«5 статья. **Ачана /ачасене/ патроната илес шутлă граждансене суйласа илесси, шута илесси тата хатĕрлесси**

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ачана /ачасене/ патроната илес шутлă граждансене суйласа илес, шута илес тата хатĕрлес ĕçе опека тата попечительство органĕсем Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă йĕркепе туса пыраççĕ.»;

3/ 6 статьяра:

1-мĕш тата 2-мĕш пайсене çакăн пек çырса хурас:

«1. Ачана /ачасене/ патроната ултă уйăхран кая мар, анчах пĕр çулталăкран ытла мар срока параççĕ.

2. Ачана патроната панă чухне унăн шухăш-кăмăлне шута илеççĕ. Вунă çул тултарнă ачана хăй килĕшсен кăна патронат воспитательне уйăрса параççĕ.»;

4-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

4/ 7 статьяна çакăн пек çырса хурас:

«7 статья. **Патронат воспитателĕ**

1. Патронат воспитателĕ умне Раççей Федерацийĕн Граждан кодексĕпе тата Раççей Федерацийĕн çемье кодексĕпе палăртакан, опекунсеме попечительсем умне тăратакан требованисене кăларса тăратаççĕ.

2. Патронат воспитателĕ патроната панă ача /ачасем/ тĕлĕшпе опекун е попечитель прависене тата тивĕçĕсене пурнăçлать, хăйĕн тивĕçĕсене Раççей Федерацийĕн саккунĕсем тата патронатла çемье /патронат, патронат воспитанийĕ/ çинчен тунă договорсемпе пăхса хăварнă йĕркепе тата условисене тĕпе хурса пурнăçламаншăн е кирлĕ пек пурнăçламаншăн явап тытать. Патронатла çемье /патронат, патронат воспитанийĕ/ çинчен тăвакан договорăн тĕслĕх формине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çирĕплетет.

3. Патронат воспитателĕ патроната панă ача /ачасем/ тĕлĕшпе хăйĕн тивĕçĕсене тÿлевсĕр пурнăçлать.»;

5/ 8 статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

6/ 9 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

«1. Патроната панă ачана /ачасене/ тăлăх, ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă, опекăпа попечительствăна панă ачасем валли Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă социаллă пулăшу тата социаллă хÿтлĕх мерисем, социаллă пулăшу енĕпе хушма гарантисем пырса тивеççĕ.»;

7/ 10 статьяна çакăн пек çырса хурас:

«10 статья. **Патронат воспитателĕсен ĕç-хĕлне асăрхаса тăрасси**

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшÿллĕн опекăпа попечительство органĕ ачан /ачасен/ пурнăç условийĕсене, патронат воспитателĕсем ачан /ачасен/ прависемпе саккунлă интересĕсене пăхăннине, унăн пурлăхне сыхласа упрас ĕçе тивĕçтернине, çавăн пекех патронат воспитателĕсем хăйсен прависемпе тивĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе палăртнă требованисене пурнăçланине Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă йĕркепе тата сроксенче тĕрĕслеме тивĕçлĕ.».

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çĕртме, 30, 41 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНĔСЕН АКЧĔСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕ çинчен» 1999 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 12 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 31 №; 2003, 53 №; 2005, 64 №; 2006, 72 №; 2007, 73 №; 2008, 77 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 86, 87 №-сем; 2012, 92, 95 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 6 статьяна çакăн пек çырса 53-мĕш пункт хушса хурас:

«$5^3$. Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн татса паракан сасă правиллĕ, комиссире яланхи йĕркепе /штатра/ ĕçлекен тата Чăваш Республикин патшалăх должноçне йышăнакан членĕ Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕпе тата федерацин ытти саккунĕсемпе палăртнă чарусемпе пÿлĕвсене пăхăнма тата тивĕççсене пурнăçлама тивĕç.»;

2/ 13 статьяра:

1-мĕш пунктра «, комисси тунă йышăнăва тĕпе хурса,» сăмахсене «Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕ тунă йышăнăва тĕпе хурса,» сăмахсемпе улăштарас, «комисси членĕсем» сăмахсене «Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн членĕсем» сăмахсемпе улăштарас;

çакăн пек çырса $1^1$-мĕш пункт хушса хурас:

«$1^1$. Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председательне, председателĕн çумне, секретарьне шанăçран тухнине пула Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче должноçран хăтараççĕ.

Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председательне, председателĕн çумне, секретарьне шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.»;

2-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

«2. Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председательне, председателĕн çумне, секретарьне должноçран хăтарасси çинчен калакан йышăнусене Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн татса паракан сасă правиллĕ членĕсен çирĕплетнĕ хисепĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен кая мар йышĕ сĕннипе, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ, Чăваш Республикин прокурорĕ, Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ сĕннипе çирĕплетеççĕ.».

**2 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çинчен» 2002 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 13 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2002, 49 №; 2005, 62 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2008, 75 №; 2009, 80 №; 2011, 88, 91 №-сем; 2012, 92 /I том/, 95 №-сем; «Республика» хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 5, 7 №-сем; «Республика» хаçат, 2014, ака уйăхĕн 2-мĕшĕ/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 7 статьяра:

2-мĕш пая çакăн пек çырса 4-мĕш пункт хушса хурас:

«4/ шанăçран тухнине пула Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн /малалла – Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» саккунĕ/ $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче.»;

çакăн пек çырса 21-мĕш пай хушса хурас:

«$2^1$.Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.»;

2/ 9 статьяна çакăн пек çырса 3-мĕш пай хушса хурас:

«3. Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă Чăваш Республикин патшалăх должноçĕсене йышăнакан çынсене шанăçран тухнине пула Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче должноçран хăтараççĕ.

Çак пайăн пĕрремĕш абзацĕнче кăтартнă çынсене шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.»;

3/ 12 статьяра «2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ» сăмахсене кăларса пăрахас;

4/ 17 статьян 6-мĕш пунктĕнче «патшалăх енчен тĕрĕслесе тата асăрхаса тăрассине» сăмахсене «патшалăх енчен тĕрĕслесе /асăрхаса/ тăрассине» сăмахсемпе улăштарас;

5/ 19 статьян 4-мĕш пунктне çакăн пек çырса хурас:

«4/ обществăри йĕркелĕхе сыхлас ĕçе хутшăнакан граждансене тата вĕсен пĕрлешĕвĕсене пулăшу парать;»;

6/ 23 статьяра:

6-мĕш пайра «Чăваш Республикинчи официаллă кăларăмсенчен пĕринче текста» сăмахсене «тулли текстне «Вести Чувашии» республика хаçатĕнче, «Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи» информаци бюллетенĕнче е «Право информацийĕн официаллă интернет-порталĕнче» /www.pravo.gov.ru/, «Интернет» информаципе телекоммуникаци сечĕн Чăваш Республикин Власть органĕсен порталĕнче /www.cap.ru/ пĕрремĕш хут вырнаçтарнă /пичетленĕ/» сăмахсемпе улăштарас;

7-мĕш пайра «вĕсене алă пуснă кун хыççăн çичĕ кун хушшинче» сăмахсене «Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă сроксенче» сăмахсемпе улăштарас.

**3 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен» 2012 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 54 №-лĕ саккунĕн /«Республика» хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем/ 11 статйин 2-мĕш пайне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

«Уполномоченнăя шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче, Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.».

**4 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен» 2012 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунĕн /«Республика» хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем/ 11 статйин 2-мĕш пайне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

«Уполномоченнăя шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче, Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.».

**5 статья**

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен» 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 57 №-лĕ саккунĕн /Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №/ 12 статйин 2-мĕш пайне çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

«Уполномоченнăя шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Федерацин «Коррупципе кĕрешесси çинчен» 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн $13^1$ статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче, Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ.».

**6 статья**

Çак Саккун, çак Саккунăн 2 статйин 6-мĕш пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Çак Саккунăн 2 статйин 6-мĕш пункчĕ 2014 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çĕртме, 30, 42 №.



## Хушма кăларăм
# Вĕрентӳ

# Сыв пуллашу парадпа та асра юлĕ

***Юлашки шăнкăрав янăранăранпа вăхăт нумай та иртмерĕ пек – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенче Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсем тытнă хыççăн яшсемпе хĕрсем шкул пурнăçĕпе сыв пуллашрĕç. Пурĕ Чăваш Енри шкулсенчен вун пĕрмĕш класран кăçал 6621 ача вĕренсе тухрĕ.***



Сыв пуллашу касĕ кашни çын кун-çулĕнче паллă йĕр хăварать. Комсомольски районĕнчи шкулсенчен 2014 çулта вĕренсе тухакансемшĕн вăл пушшех çутă пулăм пек сырăнса юлĕ. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче ку тăрăхра Республика кунне анлăн паллă тунă май мероприятисен картинче выпускниксен парачĕ те иртрĕ.

...Комсомольски салин варринче хӳхĕм костюмсемлĕ, капăр кĕпесемлĕ каччăсемпе хĕрсен ушкăнĕсем хăйсен вĕрентекенĕсемпе пĕрле черетпе утрĕç. Стайлăн, хăюллăн – чăн-чăн мăн çынсем пек... Хăйсене пĕлӳ панă педагогсене тав турĕç, асра тытма сăмах пачĕç.

Выпускниксене пурнăçăн малашнехи сукмакĕ çинче çитĕнӳ-ăнăçу сунма район пуçлăхĕ Евгений Карпеев, Комсомольски район администрацийĕн ертӳçи Михаил Афанасьев, вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Николай Максимов сăмах илчĕç. Чи маттуррисене уйрăммăн саламласси – парадăн тĕшши. Кăçал районта вăтам шкула ылтăн медальпе 30 вĕренекен пĕтернĕ. Асăнмалăх парнене çамрăксене шăпах çак мероприятире пачĕç.

Аслисен пилĕсĕр пуласлăха ярса пусма йывăр. Педагогика ĕçĕн ветеранĕ Галина Мамуткина, «Çĕр улмине мухтав» агрофирмăн генеральнăй директорĕ Хасиятулла Идиатуллин ырă сунни, чăн та, пехил выраннех пулчĕ.

Уроксем, тăхтавсем, каникулсем... Çакă йăлтах хыçа юлнине сыв пуллашу касĕн палли – шкул вальсĕ – систерчĕ. Çунатлă ĕмĕтсемпе авăрланнă хĕрсемпе каччăсен ташши вĕсен вĕрентекенĕсемшĕн те нумайлăха асра юлĕ.

«Телейлĕ çул сире!» – сунчĕç парадра яш-кĕрĕмпе хĕр-упраса.

■ **Влада МИРСКАЯ**

*Ăсталăх*

# 42 çул та хыçа юлчĕ

***Кашнин пурнăçĕнче шкул мĕнле те пулин йĕр хăваратех. Телее, маншăн ачалăхри пĕлӳ тĕнчи ыррипе кăна асра юлнă. Çакă пире вĕрентнĕ педагогсем чăн профессионалсем пулнинчен килет. Хăйсен предметне тарăн пĕлни, тавра курăмĕ анлă, пултарулăх шыравĕ вĕççĕр пулни ачасенчен чăн-чăн çынсем «калăплама» витĕм кӳнĕ.***

Шупашкар районĕнчи Ишек шкулĕнче кĕçĕн классенче пире Калерия Скворцова вĕрентнĕ. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă вăл, хăйĕн ĕçне чунпа парăннăшăн «Хисеп палли» ордена, ЧАССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕн ятне тивĕçнĕ. Кĕнеке вулама юратасси унăн тăрăшулăхне пула пуçланнă.

Вăтам классенче биологие вĕрентнĕ Анастасия Дюма манăçмасть. Вăл ертсе пыракан шкул çумĕнчи сад-пахча районта тĕслĕх лаптăк шутланатчĕ. Ял çыннисем илемлĕ хăшпĕр чечеке пуçласа кунта куратчĕç. Шкул столовăйĕ хамăрăн территорире çитĕнтернĕ пахча çимĕçпе, улма-çырлапа ачасене вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех тăрантарса пурăнатчĕ. Пахча çимĕç çитĕнекен лаптăка кĕмелли «хапха», явăнса ӳсекен ӳсен-тăранран ăсталанăскер, халĕ те куç умĕнче. Çуллахи вăхăтра шкул çумĕнче ĕçпе кану лагерĕ ĕçлетчĕ. Колхоз уйĕнче тăрмашнă чухне тĕрлĕ культура çинчен уроксенче вĕреннине аса илеттĕмĕр.

Чĕлхеçĕсен пĕлĕвĕ çирĕпчĕ. Дмитрий Федоров, Людмила Тельмова, Галина Кудрявцева çут ĕçĕн отличникĕсемччĕ. Вĕсем ертсе пынипе стена хаçачĕсем, алăпа çырнă журналсем кăлараттăмăр.

Математикăна çав тери юратса вĕренеттĕм. Çакăншăн «айăпли» – асăннă предметпа пĕлӳ панă Николай Смелов. Вăл та Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çапăçнă. Фронтра сылтăм аллине амантса çухатнăскер мирлĕ пурнăçра сулахаййипе çырма хăнăхнăччĕ. Йывăрлăхсене парăнтарма вĕрентнĕшĕн унăн умĕнче пуçăмăрсене тайма тивĕç эпир.

Физкультура урокĕсенче ГТО нормативĕсене спортăн тĕрлĕ енĕпе пурнăçламаллаччĕ. Сăнă ывăтни, йĕтре тĕртни, çӳллĕше те инçĕше сикни... – йăлтах ӳт-пĕве пиçĕхтерме усăллă пулнă. Шкулта волейбол, баскетбол, футбол площадкисем, теннис сĕтелĕ пурччĕ – кăмăл пур тăк выляма хăнăх анчах.

Физикăпа вĕрентекен Вера Илюхина пирĕн класăн ертӳçиччĕ. Вĕренекен тĕлĕшпе нихăçан та сасă хăпартса курман учитель кӳренмелли сăмах та никама каласа курман пулĕ. Килте тумалли ĕçсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыма хистетчĕ, пирĕн ăс-хакăл аталанăвĕшĕн тăрăшатчĕ. Калаçу культурине никамран ытла унран вĕреннĕ тесе шухăшлатăп. Мăшăрĕпе, шкул директорĕнче вăй хунă Геннадий Анисимовпа /халĕ И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУра кафедра ертӳçи, профессор/, хăйсен воспитанникĕсемшĕн вĕсем вĕрентекенрен те çӳлерех шайри çынсемччĕ. Вера Александровна каласа пĕтĕçтернин «çимĕçĕ» – эпир халĕ те пĕр-пĕринпе çыхăну тытни. Шкулпа сыв пуллашнăранпа 45 çул çитрĕ пулин те пĕр класрисемпе туслăх арканман-ха.

Вĕрентекен пулас ĕмĕтпе çунатланса нумай çул каялла пединститут алăкне уçнă май хама юратнă педагогсен шутĕнче курни ăнсăртран мар. Вĕрентекенсем тĕлĕшпе мана чăннипех ăнчĕ. Акă хам доска умне тăрса урок ирттерме пуçăннăранпа та 42 çул хыçа юлчĕ. Çак тапхăрта мĕншĕн ку профессие суйларăм-ши тесе пĕртте ӳкĕнмен.

■ **Галина СОЛОВЬЕВА,**
**Шупашкар районĕнчи Ишек вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ**

*Педагог сĕнĕвĕсем*

# Ачасем çине тимлĕрех пăхар

*Ачасем – пирĕн пулас ватлăх.*
**А.С.Макаренко, педагог.**

Вăтăр пилĕк çул шкулта ачасене ăс паратăп. И.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче хамăра вĕрентнĕ педагогсен сăмахĕсем час-часах аса килеççĕ. «...Пурнăç лайăхланса пынăçемĕн, пурнăçра кирлĕ япаласем нумайланнăçемĕн, культура пуянлăхĕ ӳссе пынă май çамрăк ăрăва пăхса çитĕнтересси йывăрлансах пырать, çак ĕçри çынсен яваплăхĕ татах та ӳсет», – тенĕ XX ĕмĕрти паллă педагог Василий Александрович Сухомлинский. Çак сăмахсем хальхи чăн пурнăçа пырса тивеççĕ. Радиопа телекурав тата компьютер технологийĕсем вăйлă аталаннă вăхăтра шкул ачисене пĕлӳ, воспитани парас ĕç кăткăсланса пырать. Айăпне таçта, такамра шырамалла: те пурнăç çавăн пек, те учительсемпе воспитательсен тимлĕхĕ çителĕксĕр, те ашшĕ-амăшĕ ачисене кирлĕ пек пăхмасть...

Технологисем аталанни, паллах, ачасемшĕн питĕ аван. Анчах хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ ачисене информацин çĕнĕ йышши технологийĕсемпе пĕлсе, усăллă ĕçлеттерменни те тĕл пулать. Чылай шăпăрлан кирлĕ-кирлĕ мар вăйăсемпе аппаланса вăхăтне ирттерет, куç вăйне хавшатать, ăс-тăнне сиенлет.

Кĕçĕн классенче вăй хунă май ашшĕ-амăшне çакна калас килет: ачасене асăрхаттарма çăмăлрах, тунă йăнăша вара тӳрлетме ансат мар. Çавăнпа та пепкине пĕрремĕш класа яма хатĕрленекен ашшĕ-амăшне хăш-пĕр сĕнӳ парас кăмăл пур.

1. Ачан кун йĕркине тĕрĕс йĕркелĕр. Çителĕклĕ ыйхăпа, техĕмлĕ апатпа тивĕçтернисĕр пуçне телевизорпа компьютер умĕнче ларас вăхăта кĕскетĕр.

2. Ачасене кĕнекене юратма вĕрентĕр, вулавăшсене, кĕнеке лавккине çӳреме хăнăхтарăр; сас паллисемпе, цифрăсемпе çыхăннă пуç ватмăшсемпе ребуссен тупсăмне тупма вĕрентĕр.

3. Кил-çуртра телевизор сахалрах кĕрлетĕр. Шава хăнăхнă ачан вĕрентекене те тимлĕ итлеме йывăр пулать.

4. Ача хăй юратнă сĕтел çи вăййине вылять тĕк – ан чăрмантарăр. Физиологи тĕлĕшĕнчен илсен 20-30 минут пĕр ĕçпе аппаланасси пур ачан та аталанайман-ха. Хăй юратнă ĕçĕпе ытларах ларни усăллă.

5. Пепкĕрпе сюжетлă вăйăсем ытларах выльăр. Тĕслĕхрен, «эпир больницăра», «шкулта», «автобусра», «лавккара» т.ыт.те. Çаксем лайăх вĕренме, тантăшĕсемпе сатур хутшăнма пулăшĕç.

6. Ыйтăва шухăшласа, васкамасăр хурав пама вĕрентĕр.

7. Чи пĕчĕккисен те ĕççĕр пурăнма юрамасть. Шкула кайсан çыру ĕçĕ лайăх ăнса пытăр тесен ачасен пӳрнисене çирĕплетмелле. Çакна витĕм кӳме ытларах ӳкерни, пластилинпа тĕрлĕ кĕлетке ăсталани, мозаика, пазл, «лего» пулăшĕ.

8. Ачана кантарма та ан манăр. Ытла нумай ыйтни те çирĕп мар нерв тытăмне хавшатма пултарĕ.

9. Çитĕнӳсемшĕн пĕчĕкскере хавхалантарма ан манăр. Мухтани ачан кăмăлне çĕклет. Унăн вара тата ытларах ĕçлес, тăрăшас килет. Итлемен ачана асăрхаттарма пĕлни те выранлă. Мĕн тума юранине е юраманнине пĕчĕкренех вĕрентмелле.

Хамăн шухăша паллă педагогăн Антон Семенович Макаренкăн сăмахĕсемпе вĕçлес килет: «Ачасем – пирĕн пулас ватлăх. Вĕсене тĕрĕс пăхса ӳстерсен эпир ватлăхра ырă курăпăр, япăх пăхса ӳстерсен пирĕн кулянмалла, макăрмалла пулĕ; ытти çын, пĕтĕм çĕр-шыв умĕнче намăс курма тивĕ».

■ **Ольга ПАВЛОВА,**
**Тăвай районĕнчи Тушкилти вăтам шкул вĕрентекенĕ**

# Вĕсене черчен командир теейĕмĕн

***Çамрăк армеецсен çуллен иртекен «Зарница» тата «Орленок» вăййисен финалне республикăри шкулсенче вĕренекенсем тĕплĕн хатĕрленнĕ. Тепĕр класа куçмалли зачет-экзамен умĕн мĕн вĕреннине çĕнĕрен шĕкĕлчемелле-и, ППЭне çине тăрса хатĕрленмелле-и /9-мĕш классен/ – кăмăл-туйăма та, кĕлеткене те çирĕплетекен тупăшăва пурте тенĕ пекех хапăлласа хутшăнчĕç. Çакăн çинчен Патăрьел тăрăхĕнчи Шăнкăртам ял тăрăхĕн территорийĕнчи хитре уçланкăра вырнаçнă палаткăсен лагерьне çитсе çул çитмен ачасемпе калаççан пĕлтĕмĕр.***



...Çарпа спорт вăййисене пухăннă отделенисен парачĕ пуçланчĕ. Еплерех харăссăн шартлаттарса утаççĕ йăрăс пӳллĕскерсем. Сăнатăп та – командирсен йышĕнче хĕр ачасем нумаййине асăрхатăп. Хăюллă арçын ачасем ăçта кайса кĕнĕ-ши? Канăçсăрлантаракан ыйтупа хĕр командирсен çумне «çыпăçатăп».

– Ан пăшăрханăр, пур-ха патвар, маттур арçын ачасем. Анчах, темшĕн ушкăна çирĕп йĕркере тытма ытларах пире, хĕр ачасене шанаççĕ аслисем, – тет Елчĕк районĕнчи Патреккел шкулĕнче 9-мĕш класран вĕренсе тухнă Настя Арбузова.

Хастар ушкăна Патăрьел хутлăхне Александр Адюков вĕрентекен ертсе килнĕ. Ачасем каланă тăрăх – çирĕп те, ырă кăмăллă та вăл. Ыйтнине тӳрех пурнăçлаймасан ятлас йăла çук унăн, ачана лăпкăн ăнлантарса хăнăхтарма тăрăшать. «Çакăн пек шанчăклă аслă юлташ çумра пулнăран шикленмерĕм командир пулма», – йăл кулса сăмахне тăсать çирĕп хĕр.

Унăн аташĕ, Элĕк районĕнчи Юнтапа вăтам шкулĕнчен килнĕ ушкăн командирĕ Настя Максимова вара хĕр ачасем халĕ арçын ачасенчен нихăш енпе те юласшăн маррине палăртрĕ, 8-мĕш класпа сыв пуллашнăскер вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пырать, спортпа туслă.

– Çакăнта хутшăннин уссине куратăн-и? – ыйтатăп пуçарулăскертен.

– Паллах. Кунта киличчен эпир тренировкăра вăхăт нумай ирттернĕ. Спортпа туслă пулни сывлăха çирĕплетет, кĕлетке те илемлĕ пулать, – терĕ чиперкке.

Тинех пĕлтĕм: акă мĕншĕн «Зарницăра», «Орленокра» хĕр ачасем нумай иккен! Чăн та, Çĕмĕрлерен /1-мĕш вăтам шкул/ килнĕ Катя Решновăн шухăшĕпе те килĕшмесĕр тăраймăн:

– Çар теми хĕр ачасемшĕн паян та ют мар. Хăш-пĕр чухне эпир этемлĕхĕн вăйлă çурринчен те чăтăмлăраххи пулăрать-çке. Стройпа утаймастпăр-и? Турист йĕрĕпе иртейместпĕр-и? Тинĕс тĕввине çыхма-салтма пĕлместпĕр-и? Пăшалтан та тĕл пеме пултаратпăр!

Çакăн пек харсăр командирсемпе паллашнă хыççăн манăн та вĕсен ӳсĕмне таврăнас, ушкăнпа мала тухассишĕн ăнтăлас килчĕ. Эппин, чăннипех хăйсен харсăрлăхĕпе ыттисене хĕмлентереççĕ чиперук-ертӳçĕсем.

■ **Ирина ИВАНОВА**

*Хăнасем*

# Ăслăлăх аталанăвĕшĕн – çутă ĕнчĕсем

***Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕнĕрен тăванла халăх çыннисемпе тĕл пуласси тахçанах йăлана кĕнĕ. Пирĕн пата туркка ăсчахĕсем, çыравçисем, культура ытти ĕçченĕ килнине хăнăхнă пулăм пекех йышăнма пуçларăмăр. Ентешĕмĕрсем те Турцире хăнара пулма килĕштереççĕ. Çакă мĕнпе çыхăннине филологи наукисен докторĕ Николай Егоров профессор сăмахĕсенчен аван тĕшмĕртме пулать: «Чăвашсене турккăсем тĕрĕк ытти пур халăхĕнчен ытларах юратаççĕ пулас».***

Тăван чĕлхе пирки çунатланса çырма пикентĕм-ха та... Шел, вăл хăвăрт çухалса пырать. Тĕнчери глобализаци тапхăрĕ йăхташăмăрсене вырăсланма тата та васкатать. Çĕр чăмăрĕ çинчи чи илемлĕ те çепĕç чĕлхесенчен пĕри тетпĕр те – курса-пĕлсе тăрсах ăна çухатăпăр-и? «Унăн шăпишĕн пăшăрханатпăр пулсан паян ĕçлесе, тĕпчесе ĕлкĕрмелле. Халĕччен те «уçман çеремсем» нумай-ха пуян чĕлхемĕрте», – тĕллев лартать çӳлерех асăннă паллă ăсчахăмăр.

Чăвашсем пирки каламăп, вăт туркка ăсчахĕсем пирĕн чĕлхене тĕпчеме юратни тĕлĕнтерет те, савăнтарать те. Республика кунĕ умĕн хĕвеллĕ çак çĕр-шывран Чăваш Ен ăслăлăх тĕнчишĕн чăн чаплă икĕ хăна килсе çитрĕ: Фейзи Эрсой тата Эмине Йылмаз. Вĕсем Турцире чăваш чĕлхишĕн, литературишĕн пĕлтерĕшлĕ черетлĕ ĕçĕсене пичетлесе кăларнă.

Фейзи – «Чăваш Улăп халапĕсене», Эмине вара «Нарспи» поэмăна турккălла куçарнă.

– Чăваш чĕлхи – асамлă чĕлхе. 90-мĕш çулсенче пирĕн университета чăвашсем килсен вĕсем калаçнине тимлĕ тăнларăм. Хама юмах тĕнчине лекнĕнех туйрăм. Акă ăçтан пуçланчĕ юратăвăм. Пурăна киле Турцире чăваш чĕлхипе хӳтĕленнĕ наука пĕрремĕш докторĕ пулса тăтăм. Хамăн диссертацие хатĕрленĕ чухне чăваш чĕлхи çинчен акăлчанла, турккӑлла çырнă ĕçсемпе усă куртăм. Вырăсла пĕлменни мана тĕпчев ĕçĕнче чăрмав кӳрет. Ку çул çӳрев хыççăн вырăсла та вĕренессе шанатăп, – чăн чăвашла калаçрĕ çӳлерех асăннă кĕнекесен Шупашкарта, Чăваш наци библиотекинче иртнĕ презентацийĕнче Эмине Йылмаз.

Чăваш чĕлхинче Алтай чĕлхисен сĕмĕ те палăрнине, çавăнпа пирĕн калаçу-çыру ытти тĕрĕксеннипе танлаштарсан чылай уйрăлса тăнине те тĕпчеме ĕлкĕрнĕ маттур хĕрарăм халĕ хăй вĕрентекен университетра чăваш чĕлхипе те пĕлӳ парать. Хăйĕнпе пĕрле Эмине видеодиск илсе килнĕ. Унта Турци студенчĕсем чăвашла юрланине /Любовь Мартьянова сăввипе çырнă «Чечек акрăм та...» юрра/ ӳкернĕ. Чĕрене кăтăклантарса хĕпĕртеттерекен сюжет...

Мĕншĕн шăпах Константин Ивановăн «Нарспине» куçарма шухăшланă-ха ăсчах? Хурав уçăмлă та ансат: «Уроксенче чи анлă усă куракан текст. Ăнланман çыншăн та тĕлĕнмелле илемлĕн янăраканскер...»

Фейзи Эрсой Чăваш Еншĕн «ют çын» мар. Туркка каччи хăй вăхăтĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Унпа çыхăннă шӳтлĕ самантсене халĕ те ас тăваççĕ тусĕсем. Чăваш чĕлхине тĕплĕнрех пĕлес тĕллевпе çунатланнăскер Шупашкар лавккисене кĕрсен мĕн кирлине чăвашла ыйтма хăтланнă. «Вырăсланнă» сутуçăсем вара: «Ху япшар тăхăннă-çке, калаймастăн-им вырăсла?», – текеленĕ мăкăртатса.

– 15 çул иртрĕ Чăваш Енрен тăван ене таврăннăранпа. Акă эпĕ каллех ăшă çак кĕтесе лекрĕм. Кунта манăн лайăх туссем пур. Информаци технологийĕсем аталаннă май юлташăмсемпе çыхăну çĕнĕрен вăй илчĕ. Халĕ эпĕ Чăваш Ен пирки Интернетра вуласах тăратăп.

Турцире чăваш чĕлхипе кăсăкланакан чылай, бакалавриатра та чăвашла вĕрентеççĕ. Малтанах чăваш чĕлхи кăткăс пек, тӳр килӳсене курма хăнăхатăн та – çăмăлах. Паянхи студентсене, аспирантсене вĕренме ансатрах: эпир çырнă кĕнекесем нумай пулăшаççĕ, – таса та илемлĕ Эрсойăн чăвашла пуплевĕ.

Ăсчах пире, чăвашсене, чăннипех тăван пек йышăнни вăл хăйĕн калаçăвĕн вĕçĕнче асăнса хăварни те çирĕплетрĕ: «Çемьеллĕ эпĕ. 8 çулти хĕрĕм пур. Вăл Атăл ятлă. Сире салам каласа ячĕ».

Чăвашлăха упрама, пирĕн халăхăн пуянлăхне килес ăрусем валли Тăван çĕр-шывра кăна мар, тĕнчен аякри кĕтесĕнче те сыхласа хăварма ăнтăлакан çак çынсене çутă, йăлтăркка ĕнчĕпе танлаштармалла-тăр. Эмине чăваш ваттисен сăмахĕсене тĕпчесе уйрăм кĕнеке кăларни, Эрсой тупмалли юмахсене халалласа тĕпчев ĕçĕ çырни чăваш ăсчахĕсене, культурăпа çыхăннă тытăмра ĕçлекенсене, студентсене, вĕренекенсене халăхăмăршăн пĕлтерĕшлĕ çĕнĕ утăмсем тума хавхалантартăрччĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА**

# Чун туртăмĕ хĕмлентерсен



Ольга Семенова Ямаш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех юрă-ташăпа туслашнă. Уйрăмах ташлама килĕштернĕ. Шкулта пĕр концерт та вăл хутшăнмасăр иртмен. Ӳссен кам пулассине малтанах палăртса хунă. Вăтам пĕлӳ илсен çутă ĕмĕтне пурнăçлас тĕллевпе И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн вырăс чĕлхипе литература факультетне вĕренме кĕме ыйтса çырать. Экзаменсене ăнăçлă тытса студентсен туслă йышне кĕрет.

Студентсен концертĕнче ташлама сатур хĕре электроаппаратура завочĕн Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ культура çурчĕн илемлĕх ертӳçи асăрхать. Вăл Ольгăна ташă ансамбльне чĕнет. Мĕн вĕренсе пĕтеричченех çак предприятин пултарулăх коллективĕпе пĕрле Чăваш Ен, кӳршĕ республика çыннисене савăнăç кӳрет. Чăваш культурине, йăли-йĕркине аталантарас ĕçе активлă хутшăннăшăн, студентсен строительство отрядĕнче хастар ĕçленĕшĕн Ямаш хĕрне Чăваш АССР Аслă Канашĕн Хисеп грамотипе наградăлаççĕ. Дипломлă специалист пулса тăрсан педагогика ĕçне пуçăнать. Тăван ялти шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать.

Ольга Исааковна шкулта ачасен ташă ансамбльне йĕркелет. Çирĕм çиччĕмĕш çул вăл ачасене вырăс чĕлхипе литературине юратма тата ташлама вĕрентет. Вăл ертсе пынипе çамрăк артистсем районта иртекен пултарулăх фестивалĕсене хутшăнаççĕ, темиçе хутчен малти вырăна йышăннă. Репертуарта ытларах – чăваш ташшисем. Çак сăн ӳкерчĕке ĕçпе юрă тата спорт уявĕнче тунă. Ансамбль уяв сцени çинче Ямаш тăрăхĕнчи ташша кăтартрĕ.

О.Семенова – аслă категориллĕ специалист, ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçри çитĕнӳсемшĕн ăна Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотипе чысланă.

■ **Виталий АЧЧА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

